# Чăваш Социализмлă Совет Республикин государство суверенитечĕ ҫинчен калакан

# ДЕКЛАРАЦИ

Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикин Верховнăй Совечĕ,

республикăн мĕнпур нацисен гражданĕсенчен тăракан халăхĕн шухăш-кăмăлне тата интересĕсене палăртса,

Этем прависен пĕтĕмĕшле декларацийĕн принципĕсене пăхăнса,

РСФСРти тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсен суверореннăй прависене хисеплесе,

чăваш нацийĕн тата республикăри пĕтĕм халăхăн шăпишĕн ответлăха хăй ҫине илсе,

чăваш нацийĕн культурине, чĕлхине, традицийĕсене тата йăли-йĕркине сыхласа хăварма кирлине шута илсе,

республикăн нумай нациллĕ халăхне политика, экономика, социаллă пурнăҫпа ăс-хакăл енĕпе малалла аталантармашкăн унăн право статусне вăраха ямасăр анлăрах сарма кирлине ăнланса,

демократилле право государстви туса хума тăрăшса,

**ҫапла пĕлтерет:**

Чăваш Социализмлă Совет Республикин государство суверенитечĕ, республикăн пĕтĕм территорийĕнче республикăн государство влаҫĕ чи аслă пулни, хăй тĕллĕн ĕҫлени тата никама пăхăнманни ҫинчен пĕлтерет.

1. Чăваш Социализмлă Совет Республики — чăваш нацийĕн суверенитетлă государстви, унăн наци-государство тĕлĕшĕнчи пĕртен-пĕр пĕрлешĕвĕ. Чăваш ССРĕ — чăваш нацийĕ хăйĕн самоопределенийĕн никам туртса илейми правине пурнăҫа кĕртнин никĕсĕ ҫинче РСФСР тата ССР Союзĕн федерацийĕн субъекчĕ пулса тăрать.

2. Республикăра государство влаҫĕн суверенитетне тытса тăракан тата унăн ҫăлкуҫĕ — республика халăхĕ. Унăн тулли влаҫне Чăваш ССР Конституцийĕн никĕсĕ ҫинче тӳрремĕнех тата халăх депутачĕсем урлă пурнăҫа кĕртсе пыраҫҫĕ. Халăх ячĕпе сăмах калама Чăваш ССР Верховнăй Совечĕн кăна право пур.

3. Республика территорийĕнче Чăваш ССР Конституцийĕ тата Чăваш ССР законĕсем пуҫпулса тăмалли йĕрке туса хураҫҫĕ. ССР Союзĕн тата РСФСР законĕсем, Чăваш ССР Конституцине, Союз тата Федераци договорне хирĕҫлемесĕ пулсан, Чăваш ССР территорийĕнче вăйра тăраҫҫĕ.

4. Чăваш ССР гражданĕсем ҫакăнпа пĕрлех ССР Союзĕпе РСФСР гражданĕсем шутланаҫҫĕ.

5. Чăваш ССР территорийĕнче государство чĕлхисем пулма чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхине ҫирĕплетеҫҫĕ. Республика территорийĕнче пурăнакан ытти нацисен чĕлхисен ирĕклĕ аталанăвне хӳтĕлеҫҫĕ.

6. Чăваш ССРĕ чăваш нацийĕн, ытти нацисен культурине ирĕклĕн аталантармалли майсем туса хурать, Чăваш ССР тулашĕнче пурăнакан чăваш нацийĕн ҫыннисен наци культурине аталантарма пулăшать.

7. Чăваш ССРĕн государство гербĕ, ялавĕ тата гимнĕ пур.

8. Чăваш ССР территорине халăх референдум ирттерсе вăл хăйĕн шухăшне палăртмасăр улăштарма пултараймаҫҫĕ.

9. Экономика гарантийĕсене ҫирĕплетме республика халăхне хăйĕн наци пуянлăхĕпе хуҫа пулма, унпа усă курма чи пысăк право параҫҫĕ. Харпăрлăх объекчĕсене республикăпа ССР Союзĕ хушшинче тата федераци субъекчĕсем хушшинче уйăрма, ҫавăн пекех республика пурлăхне ССР Союзĕпе РСФСР аллине пама тивĕҫлĕ килĕшӳсем тăваҫҫĕ.

10. Ҫĕр, ҫĕр айĕнчи пуянлăх, шывсем, вăрмансем, ӳсентăран тĕнчипе чĕрчунсен тĕнчи, ҫутҫанталăкăн ытти ресурсĕсем Чăваш ССР харпăрлăхĕ пулса тăраҫҫĕ. Республика хăйĕн территорийĕнче ҫутҫанталăкпа тĕрĕс усă курать, халăхăн экологи тĕлĕшĕнчи хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшать.

11. Чăваш ССРĕ, хăй ССР Союзĕпе РСФСР аллине панă полномочисемсĕр пуҫне, бюджетпа налог политикине хăй тĕллĕн палăртать, халăха социаллă пурнăҫра хӳтĕлет.

12. Чăваш ССРĕ федераци субъекчĕсемпе экономика тата ытти енĕпе ҫыхăнусем йĕркелет, ССР Союзĕнче тата РСФСРта полномочнăй представительствăсем тытма пултарать.

13. Чăваш ССРĕ тулашри экономика ĕҫне туса пырать, урăх государствăсемпе тӳрремĕнех экономика тата культура ҫыхăнăвĕсем тытассине йĕркелет, хăйĕн валюта фондне туса хурать.

14. Малашне государствăн официаллă ячĕ вырăнне Чăваш Социализмлă Совет Республики ятпа — Чăвашъен Республики ятпа усă курас.

15. Ҫак Деклараци Чăваш ССР Конституцине йышăнмалли, Федераципе Союз договорĕсене тумалли никĕс пулса тăрать.

**Чăваш ССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ А. ЛЕОНТЬЕВ.**

Шупашкар хули, 1990 ҫулхи октябрĕн 24-мĕшĕ.